25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 НОЯБРЬ 1 ВЫРСАРНИКУН 256 (6191) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Колхозниксемпе колхозницăсем, совхозсенчи рабочисемпе работницăсем! Фронтпа çĕршыва ытларах продовольстви, промышленность валли ытларах чĕртавар парăр! Хăвăрăн мĕнпур вăйсене фронта пулăшнă çĕре, тăшмана çапса аркатнă çĕре парăр! Йăлтах фронт валли!

(Октябрьти социализмлă Аслă революци XXV çул тултарнă тĕле ЦК ВКП(б) кăларнă лозунгсенчен)

Уяв кунĕччен кĕрхи çĕртме сухине туса пĕтермелле

Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарнă уяв çывхарать. Совет Союзĕнчи халăхсем ăна кăçал нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан отечественнăй вăрçăн хаяр кунĕсенче кĕтсе илеççĕ. Нимĕç фашисчĕсен тискер кĕтĕвĕсем тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла килсе тапăнчĕç. Çак тискер кайăксем пирĕн ирĕклĕхе пĕтерсе хурасшăн, пирĕн пурлăха, çĕре туртса илсе совет çыннинчен нимĕç баронĕсен тарçи туса хурасшăн. Анчах та Совет Союзĕнчи пĕтĕм ĕçхалăхĕ тăшмана хирĕç хаяррăн çĕкленчĕ, ăна пĕтерсе тăкса çĕнтерӳ тăвассишĕн кĕрешет.

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе, пирĕн колхозсем кăçал та тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çар валли çителĕклĕ таран тырпул туса илчĕç, ăна уйхирсенчен вăхăтра пухса кĕртнĕ. Нумай колхозниксемпе колхозницăсем ялхуçалăхĕнче кăçал нихăçанхи пек мар пысăк хастарлăхпа ĕçлерĕç. Халĕ те, кĕрхи çĕртме тунă çĕрте, авăн çапнă çĕрте, колхозниксем ырми-канми ĕçлеççĕ.

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, республикăри нумай колхозсем ялхуçалăхĕнчи ĕçсене ноябрĕн 1-мĕшпе 10-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех вĕçлеме хăйсем çине обязательствăсем илчĕç. Тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çара вăйлăрах пулăшу парас тĕллевпе хавхаланса, колхозниксемпе колхозницăсем обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пыраççĕ.

Колхозсемпе машинно-тракторнăй станцисен халь уйрăмах кĕрхи çĕртме планне ăнăçлăн пурнăçлассишĕн пысăк вăй пухса ĕçлемелле. Кăçал пирĕн колхозсем тухăçлă тырпул туса илчĕç, ăна çапса пуçтарса хурас ĕç те ăнăçлăн пулса пырать. Килес çул пирĕн колхозсен тĕштырăсене те, техникăллă культурăсемпе пахча-çимĕçсене те пысăкрах тухăçпа туса илмелле. Тăван çĕршывпа фронт интересĕсенчен тухакан задача çапла. Çавăнпа та кĕрхи çĕртме сухине нумайрах тата паха тăвассишĕн халь кашни колхоз большевикла кĕрешмелле, кашни колхозăн кĕрхи çĕртме тумалли государство планне ăнăçлăн тултармалла. Анчах та кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре пирĕн республика кăçал каярах юлса пырать. Çакна шута илсе, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ ноябрĕн 1-мĕшпе 7-мĕшĕ хушшинчи эрнере районсемпе колхозсем кĕрхи çĕртме туса пĕтерессишĕн фронтри пек ĕçлемелли эрне турĕç.

Кĕрхи çĕртме сухине туса пĕтерессишĕн фронтри пек ĕçлемелли эрнен пĕрремĕш кунне республикăри чылай районсем çак ĕçе нумай хăвăртлатнипе паллă тăваççĕ. ВКП(б) Елчĕк райкомĕ хăйĕн пĕтĕм активне колхозсене кăларса янă, кĕрхи çĕртме тумалли çирĕп график тунă, май килнĕ таран лашасене пурне те сухана кӳлтернĕ. Октябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне район кĕрхи çĕртме тумалли плана 67 процент тултарнă, 12 колхоз кĕрхи çĕртме сухине туса пĕтернĕ.

Шăхасан районĕнчи колхозсем те кĕрхи çĕртме сухине çак эрнере туса пĕтерессишĕн ĕçе активлăн хутшăнчĕç. Октябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне районра 11 колхоз кĕрхи çĕртмене ăнăçлăн вĕçлерĕç. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсем фронтри пек ĕçлемелли эрнене кĕрхи çĕртме тумалли плана 81 процент пурнăçланипе кĕчĕç. Районри колхозсен татах 1.140 гектар сухаламалла. Çирĕплетнĕ график тăрăх, фронтри пек ĕçлемелли эрнере кашни кун 16-шар гектар кĕрхи çĕртме тумалла. ВКП(б) Сĕнтĕрвăрри райкомĕ колхоз председателĕсемпе бригадирĕсене тата счетоводсене кашни кунах плана тултарса ĕçлеме чĕнчĕ. Октябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне районри 18 колхоз кĕрхи çĕртме планне тултарса планран иртт ерсе сухалама тытăннă.

ВКП(б) райкомĕсен, райсовет исполкомĕсемпе çĕрĕç пайĕсен фронтри пек ĕçлемелли эрнере кĕрхи çĕртме сухине тăвас ĕçе лайăх организацилесе пымалла. Ĕçе колхоз активне, комсомолецсемпе çамрăксене анлăн хутшăнтармалла, ĕçĕн пахалăхĕшĕн кĕрешмелле.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ фронтри пек ĕçлемелли эрнере кĕрхи çĕртме сухине тума мĕнпур лашасене кӳлме, тракторсене ир пуçласа каçченех ĕçлеттерме, кашни сухаçăна уйрăм участоксем уйăрса пама, сухаçăсене вĕри апат пĕçерсе çитермелле тума хушнă. Кашни тракториста сухаçăна кулленех заданисем памалла, вĕсене епле пурнăçласа пынине колхоз председателĕсемпе бригадирсен шута илсе пымалла.

Районсенчи комсомол организацисем кĕрхи çĕртме тăвассине вĕçлессишĕн фронтри пек ĕçлемелли эрнере уйрăмах кăтартуллăн ĕçлеме тивĕçлĕ. Кашни комсомолец фронтри пек ĕçлемелли эрнен участникĕ пулмалла, кĕрхи çĕртме тунă çĕрте колхозниксене пример кăтартмалла. ВЛКСМ Обкомĕпе райкомĕсем колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксене лайăхрах, конкретнăрах ертсе пыма тивĕçлĕ.

Октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне республикăри колхозсем кĕрхи çĕртме тумалли государство планне 52,1 процент пурнăçланă, республикăра 69 колхоз çеç кĕрхи çĕртме туса пĕтернĕ. Фронтри пек ĕçлемелли эрнере кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе тĕпренех вăйлатмалла, килес çул акмалли кашни гектар çĕре кăçал пысăк пахалăхпа сухаласа хăварни вăл—килес çулти тырпулăн тухăçлăхне ӳстермелли май пулса тăрать. Çакна шута илсе кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе пĕр куна та кая хăвармалла мар. Кашни колхозăн Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарнă уяв тĕлне кĕрхи çĕртме туса пĕтермелле.

Кĕрхи çĕртмене васкасах сухаламалла

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, октябрĕн 30-мĕшĕ. **(Хамăр корр.).** Албахтинăри «Партизан» колхоз кăçал 355 гектар çинчи тырпулсене уйран 13 ĕçкунĕ хушшинче пухса кĕртнĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем уборка вăхăтĕнче фронтри пек хастарлăн ĕçленĕ. Халĕ те, авăн çапнă çĕрте, нумай колхозниксем кунне-çĕрне пĕлмесĕр пысăк вăй хурса ĕçлеççĕ. Авăна молотилкăсемпе кăнтăрла та, каçхине те çапаççĕ. Икĕ молотилкăпа талăкра 125-шер центнер тырă çапса кăлараççĕ.

Авăн çапнă çĕрте кулленех 36 çын ĕçлет. Вĕсенчен нумайĕшĕ стахановецсем. Е. Егорова колхозница машинист пулса ĕçлет, талăкри нормăна тăтăшах иртт ерсе тултарать. Колхоз счетовочĕ Ефимов юлташ çак икĕ эрне хушшинче авăн çапнă çĕрте машинист пулса ĕçлет, 27 кун хушшинче вăл 102 гектар çинчи тырра çапнă. Авăн çапас ĕçе лайăх туса пынă май, колхоз государствăна тырă, пахча-çимĕçсем пĕтĕмпех парса татнă.

Анчах та колхоз руководителĕсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕç çине çителĕксĕр çаврăнса пăхаççĕ. Тӳрех калас пулать, çак пысăк ĕçе кунта хакламаççĕ. Колхозăн кĕрхи çĕртме сухине кăçал 120 гектар туса хăвармалла. Паянхи куна 30 гектар çеç сухаланă. Ĕçĕн хăвăртлăхне ӳстерсе пыма колхоз пултарать, анчах çапах та сухана куллен 14 лаша кӳлмелле пулсан, 8 лаша çеç кӳлеççĕ. Çитменнине тата 12—13 сантиметр тарăнăш кăна сухалаççĕ.

С. ШАДИН.

Пысăк çу завочĕ строя кĕрет

Октябрьти революци 25 çул тултарнă тĕле Таджик республикинчи чи пысăк çу завочĕсенчен пĕри—Регарски çу завочĕ строя кĕрет. Вăл çĕр мамăкĕн тĕшшинчен çимелли паха çу çапса кăларать, отходсенчен—хуçалăх çăвĕ кăларать. Ноябрь уйăхĕнче Высокогорски районра Шааратузски çу заводне ĕçе яраççĕ. (ТАСС)

СССР Совнаркомĕнче

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

Ĕççыннисен кăмăлне шута илсе, кăçалхи ноябрĕн 8-мĕш кунне ĕçлемелли кун тесе шутлас, праçнике пĕр кун кăна —ноябрĕн 7-мĕшĕнче кăна тăвас.

Польша посолне г-н Т. Ромера В. М. Молотов юлташ йышăннă

Октябрĕн 30-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Польша республикин ССР Союзĕнчи çĕнĕ чрезвычайнăй тата полномочнăй посолне г-н Т. Ромера йышăннă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 30-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 30-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче, **Туапсерен** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата **Нальчик** районĕнче çапăçнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

Пирĕн карапсем Балтика тинĕсĕнче нимĕçсен пĕтĕмĕшпе 20 пин тонна водоизмещениллĕ 2 транспортне путарнă.

* * *

Октябрĕн 29-мĕшĕнче пирĕн авиаци фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 40 автомашинине пĕтерсе тăкнă, горючи складне сирпĕнтерсе янă, чугун çул çинчи 3 состава çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине 2 ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем гитлеровецсен атакисене сирсе тăнă. Кун каçиччен противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1.100 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 8 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, минометсен 6 батарейине тата артиллерин батарейине пусарса лартнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе нимĕçсен 18 самолетне ӳкернĕ. Политрук заместителĕ Плешков юлташ противотанковăй пăшалпа персе нимĕçсен 2 самолетне ӳкернĕ. Çавăн пекех тата противникăн пĕр самолетне кĕçĕн-лейтенант Г. Пахренко юлташ персе ӳкернĕ. Кĕçĕн лейтенант Калинин юлташ противотанковăй пăшалпа персе нимĕçсен йывăр танкне çĕмĕрнĕ. Ку ĕнтĕ вăл лейтенант пĕтерсе тăкнă 5-мĕш танк пулнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре вырăнти çапăçусем пулса иртнĕ. Н-ски подразделени, румынсен атакине сирсе пăрахса, тăшманăн 180 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем противник вырнаçса тăнă çĕре кĕрсе кайнă. Штык вĕççĕн тăрса çапăçса, гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Пĕр оруди, 2 миномет, 5 пулемет, радиостанци тата боеприпассем тиенĕ 2 автомашина тытса илнĕ.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем, противник вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, ерипен малалла куçнă. Пĕр высота районĕнче, нумай кун хушши пынă ăнăçсăр атакăсем хыççăн, гитлеровецсем оборонăна куçнă. Икĕ кун хушшинчи çапăçусенче çав участокра нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра тинĕс пехотин подразделенийĕ, противникăн атакине сирсе пăрахса, 200 çити гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нальчик районĕнче пирĕн чаçсем противникăн танкĕсемпе пехотине хирĕç оборонăра тăрса çапăçнă. Н-ски чаçăн боецĕсем пĕр высота районĕнче гитлеровецсен хаяр атакисене сире-сире пăрахнă. Нимĕçсен 2 танкне çĕмĕрнĕ тата тăшманăн пехотине пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Каç пулнă тĕле тăшманăн йышлăрах вăйĕсем хĕснипе пирĕн подразделенисем оборонăн çĕнĕ рубежĕ патне куçнă.

* * *

Воронеж районĕнче артиллерирен персе вăйлăн тапăннипе тăшманăн 24 дзотне ишĕлтернĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, минометсен 2 батарейине пусарса лартнă. Пĕр участокра нимĕçсен отрячĕ пирĕн укреплениcем вырнаçнă çĕрте разведка тума хăтланнă. Пирĕн боецсем, противника çĕр метра çити çывăха пыма панă та, унтан пăшалсемпе пулеметсенчен персе 40 ытла гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Кун каçиччен пирĕн снайперсем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 150 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Орел облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен отрядăн партизанĕсем нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен халăх пурăнакан икĕ пунктри гарнизонĕсем çине пĕр вăхăтрах пырса тапăннă. Разведчиксем çыхăнăва татнă, часовойсене пĕтернĕ. Унтан совет патриочĕсем ялсене çĕмĕрсе кĕнĕ те, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем тăракан çуртсем çине гранатăсем вăркăнтарнă. Тарса çăлăнма хăтланакан гитлеровецсене партизансен халăх пурăнакан пунктсем тавралартса тухнă засадисем вĕлере-вĕлере пĕтернĕ. Çав операци вăхăтĕнче, нимĕçсен 150 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен пĕр танкне, 2 бронемашинине тата 4 самолетне çунтарса янă. Партизансем 76 миллиметрлă 2 оруди, 16 пулемет, 10 миномет, 9 винтовка, 25.500 патрон, 316 мина, радиостанци тата 54 лаша тытса илнĕ.

* * *

Германин чылай районĕсенче юлашки вăхăтра лагерьсенчен французсен тыткăна лекнĕ çар çыннисем час-часах тара-тара кайма тытăннă. Октябрĕн пуçламăшĕнче Тегеран кӳлли патĕнче тыткăнрисен ушкăнĕ хурала хĕçпăшалсăрлантарнă та тарса пытаннă. Нумаях пулмасть, Розенгейм патĕнче тыткăнрисем засадăра пытанса ларса, 11 гестаповеца, хăйсене тытса чарма пăхакансенерсене, вĕлернĕ. Анатри Баварире тыткăнри французсен хĕçпăшалланнă пысăк мар отрячĕсем çӳреççĕ. Çав çынсем лагерьсенчен туха-туха тарнă та халĕ тăван çĕршывнелле куçса пыраççĕ.

Октябрĕн 31-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 31-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче, **Туапсерен** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата **Нальчик** районĕнче çапăçнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

Финн заливĕнче пирĕн авиаци противникăн миноносецне путарнă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем оборонăра тăрса вăйлăн çапăçнă. Противник пехотăн пĕр батальона çити вăйĕпе тата 8 танк пулăшса пынипе заводсен районĕнче пирĕн позицисене атакăланă. Гитлеровецсен атакине сирсе пăрахнă. Пирĕн бронебойщиксем нимĕçсен 3 танкне персе çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсен ушкăнĕ, рота командирĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ Преображенский юлташ ертсе пынипе, противникăн атакине сирсе пăрахнă. 8 сехет хушши пынă çапăçура пирĕн боецсем гитлеровецсене пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем хăйсем йышăнса тăракан рубежсене çирĕплетнĕ тата разведка тунă. Н-ски подразделени, румынсемпе çапăçса, тăшманăн 80 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Икĕ миномет, 4 пулемет тата 250 ручной граната тытса илнĕ. Н-ски чаçăн артиллерисчĕсем тăшманăн 3 дзотне, 5 блиндажне ишĕлтернĕ тата нимĕçсен çĕр ăшне чавса лартнă 2 танкне пĕтерсе тăкнă.

Нальчик районĕнче хаяр çапăçусем пынă. Противник автоматчиксен пĕр батальона çити вăйĕпе, 65 танкпа бронемашина тата авиаци пулăшса тăнипе, халăх пурăнакан пĕр пункта темиçе хутчен те атакăланă. Пирĕн боецсем гитлеровецсен атакисене сирсе пăрахнă. Нимĕçсен 4 бронемашинине, 18 танкне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Н-ски часть противникăн икĕ атакине сирсе пăрахнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 240 вилли выртса юлнă. Пирĕн артиллери персе противникăн боеприпассем турттарса пыракан 20 автомашинине çĕмĕрнĕ е сирпĕнтерсе янă.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре разведчиксем шыраса çӳренĕ. Боецсен капитан Смирнов юлташ командир пулса ертсе пыракан группи, тăшманăн тылĕнче кĕрешсе, 60 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ тата радиостанци тытса илнĕ. Халăх пурăнакан Г. пунктра Поподозьян юлташ командир пулса ертсе пыракан отряд нимĕçсен стрелковăй чаçĕн штабне çапса аркатнă. Кĕске вăхăт хушшинче пулса иртнĕ тытăçура пирĕн боецсем темиçе офицера пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен салтакĕсене тата штаб докуменчĕсене тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн пĕр участокĕнче нимĕçсем пирĕн позицисене темиçе хутчен те атакăласа пăхнă. Н-ски чаçăн боецĕсем противникăн атакисене сирсе пăрахнă. Çав участокри çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 700 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Орел партизанĕсен отрячĕ октябрь уйăхĕнчи икĕ эрне хушшинче нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен чугунçул çинчи 12 эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Катастрофăсем пулнă пирки 126 çар вагонĕ, боеприпассем тиенĕ 9 вагон, автомашинăсем тиенĕ 8 платформа пĕтнĕ. Орел партизанĕсен тепĕр отрячĕ тăватă кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен бронепоездне, автодрезинине тата çар техникипе ытти тĕрлĕ çар снаряженийĕ турттарса пыракан темиçе составне çĕмĕрнĕ.

* * *

Венгерецсен строительнăй батальонĕнчи Янош М. салтак Хĕрлĕ Çар енне каçнă. Вăл çапла каласа панă: «Нимĕçсем çунтарса янă ялсемпе хуласене эпĕ нумай куртăм. Темиçе кун хушши эпĕ Орел хулинче пултăм. Унта çынсем сахал тăрса юлнă. Нимĕçсемпе венгер салтакĕсем хулари тата хула таврашĕнчи ялсенче пурăнакан çынсене çаратса пĕтернĕ. Выçăхса начарланса çитнĕ хĕрарăмсем мĕлкесем пек çӳреççĕ. Венгри офицерĕ, старши лейтенант Банович 15 кĕрĕкпе тăлăп, 8 сехет, атă-пушмаксем нумай, темиçе ковер тата ытти япаласем çаратса тултарнă. Çав япаласем икĕ лав çине аран шăнăçрĕç».

* * *

Пирей хулинче (Греция) Италин пĕр чаçри салтакĕсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне кайма килĕшмен. Итали жандармĕсем нимĕçсем пулăшнипе кăна 200 салтака хĕçпăшалсăрлантарса арестлеме пултарнă. Вĕсене вара сăнчăрсемпе сăнчăрланă та концентрациллĕ лагере ăсатнă.

Йĕпреç район совечĕн сессийĕ

Ĕççынни депутачĕсен районри совечĕн çак кунсенче пулса иртнĕ черетлĕ сессийĕ 1942 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен хăшпĕр итогĕсемпе черетре тăракан задачăсем çинчен сӳтсе-яврĕ. Ку ыйтупа райсовет исполкомĕн председателĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ И. Алексеев юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик та, пренире тухса калакан депутатсем те кăçал ялхуçалăх ĕçĕсене чылай хăвăртраххăн туса пынине палăртрĕç. «Трактор на хоме», «Молния», «Коминтерн», «Большевик», «Красный Октябрь», «Красный фронтовик», «Правда» колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçленĕ, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесе памалли плана тултарнă. Обществăллă выльăх-чĕрлĕхсен витисене юсаса ăшăтнă, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарнă.

Анчах районра ялхуçалăх ĕçĕсенче, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парса татас ĕçре юлса пыракан ялсовечĕсемпе колхозсем те чылай-ха.

Авăн çапас ĕç те районра вăрахăн пулса пырать. Октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне авăн çапас плана 70,4 процент çеç пурнăçланă. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Калинин ячĕпе тăракан, «Красный металлист», «Красный водник», «10 лет Октября» колхозсем ĕçе начар организациленĕ. Çак асăннă колхозсен руководителĕсем МТС молотилкипе колхозри молотилкăсене туллин ĕçлеттермеççĕ.

Сесси кĕрхи çĕртме тăвас ĕç вăрахăн пулса пынине палăртрĕ. Октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне район кĕрхи çĕртме тумалли плана 42,8 процент çеç пурнăçланă. «Большевик», «Трактор на хоме» колхозсем çеç кĕрхи çĕртмене туса пĕтернĕ. «Красный металлист» «Ударник», «Чувашия», «Красный водник» колхозсем çĕртме тумалли плана 12—15 процент çеç пурнăçланă.

Сесси çавăн пекех колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе районри чылай колхозсем паха çитĕнӳсем тунине палăртрĕ. «Правда» колхоз выльăх-чĕрлĕхсен шутне ӳстерме кăçал çĕнĕрен 2 пуç пăру тата 28 пуç сурăх туяннă. Халĕ вара ку колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана мăйракаллă шултăра выльăхсем тĕлĕшпе 110 процент, сыснасем енĕпе 105 процент, сурăхсем енĕпе 100 процент тултарнă. Выльăх витисене юсаса çитернĕ.

Сесси Октябрьти революци 25 çул тултарнă уява ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçленипе, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли тата çĕртме тумалли плансене тултарнипе, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана иртт ерсе тултарнипе кĕтсе илме практикăллă мероприятисене палăртрĕ.

Д. МИХАЙЛОВ.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Ăмăртури çитĕнӳ

КУСЛАВККА, октябрĕн 31-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Шелухин юлташ директор пулса ертсе пыракан комбинат октябрь уйăхĕнчи производство программине тултарчĕ. Комбинат коллективĕ çак çитĕнĕве уяв умĕнхи ăмăртура тăрăшса ĕçленипе турĕ.

Уйрăм цехсенчен октябрь уйăхĕнче Пушкин юлташ ертсе пыракан цех лайăх ĕçлерĕ. Уйăхри плана вăл 20 кун хушшинче тултарчĕ. Халĕ цех коллективĕ ноябрьти план шучĕпе ĕçлет.

Дружинин, Симонов тата Калашников юлташсен цехĕсем те уйăхри плана срокчен вĕçлерĕç, фронтпа халăх хуçалăхне планран иртт ерсе продукци пачĕç.

Октябрьти революци 25 çул тултарнине тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленсе, комбинатри рабочисемпе работницăсем ырми-канми ĕçлеççĕ. Симонов цехĕнчи токарь Климашевский юлташ, 66 сехет хушши цехран тухмасăр ĕçлесе, хăйне панă васкавлă задание 800 процента яхăн тултарнă. Çак цехри слесарь Колесников тата Дружинин цехĕнчи столярсем Вареспа Микельсонс юлташсем те виçшер талăк пĕр канмасăр ĕçлерĕç, хушнă ĕçсене срокра турĕç. Пушкин цехĕнчи стахановец Харинский юлташ уйăхри нормăна 600 процент, Береговой юлташ — 200 процент тултарнă. Калашников цехĕнчи Злочевский мастер тата Герасимовпа Павлов сборщиксем те октябрь уйăхĕнче нормăран икĕ хут тухăçлăрах ĕçленĕ.

Н. ПЕТРУЧЕНКО,
Комбинатри партбюро секретарĕ.

Уява—производствăллă парне

Шупашкарти «Красный мебельщик» промартель уйăхран уйăха лайăхрах ĕçлесе пырать. Августпа сентябрь уйăхĕсенчи плана иртт ерсе тултарнăшăн артель коллективĕ Чăваш АССР Совнаркомĕн премийĕсене илме тивĕçлĕ пулчĕ. Коллектив октябрь уйăхĕнчи плана та чылай иртт ерсе тултарчĕ. Механически цехри Коновалов, Чилимова, Алексеева юлташсем — трехсотниксем; Шниткина, Гаранина юлташсем—двухсотниксем. Сборочнăй цехра Галиуллин, Кальмович тата Григорьев столярсем те нормăран 3 хут тухăçлăрах ĕçлеççĕ.

В. ЕГОРОВ.
Артель правленийĕн председателĕ.

УЙĂХРИ ПЛАНА СРОКЧЕН ТУЛТАРЧĔ

Шупашкарти пир тĕртекен фабрика (главнăй инженерĕ Рохлин юлташ) октябрь уйăхĕнчи производство программине срокран 1,5 кун малтан тултарчĕ. Иртнĕ уйăхра пулнă хăшпĕр чăрмавсене фабрика коллективĕ ăнăçлăн сирсе пычĕ. Рабочисемпе работницăсем, Октябрь уявне тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленсе, яланхинчен чылай тухăçлăнрах ĕçлерĕç. Гутникова, Кунстманис, Андреева, Лейсерова, Хазе тата Пугачевская стахановкăсем хăйсен нормисене кашни кун иртт ерсе тултарчĕç. Фронтпа çĕршывăн заказĕсене пурнăçланă вăхăтрах фабрика ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсем туса кăларать. Производствăран юлнă çипсенчен шăçиххисем, сумка çаккисем тата ытти çавăн пек япаласем тĕртет.

Панă сăмаха пурнăçа кĕртрĕмĕр

ВАРМАР, октябрĕн 31-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Спорт инвентарĕсем тăвакан фабрика коллективĕ, уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, çулталăкри производство программине ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне 125 процент тултарма пулнăччĕ. Коллектив çак обязательствăна срокчен пурнăçларĕ: паянхи кун тĕлне çулталăкри программăна вăл 126,4 процент тултарчĕ. Халĕ рабочисемпе работницăсем фронтпа çĕршыв валли планран иртт ерсе продукци туса кăлараççĕ.

Сентябрьти ĕç нормине фабрикăри кашни рабочи вăтамран 169,5 процент тултарчĕ. Малтанлăха шутласа пăхнă тăрăх, рабочисен ĕç тухăçлăхĕ октябрьте те çавăнтан кая пулмасть. Уйрăмах Е. Голубева, С. Елизарова, М. Федорова станочницăсем тухăçлă ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен нормисене уйăхсерен 2—2,5 хут иртт ерсе тултараççĕ. Упаковщица И. Кириллова юлташ вара нормăран 3 хут тухăçлăрах ĕçлет.

И. ГОРБУНОВ,
Фабрика директорĕ.

Ленинпа Сталин—Октябрьти революцин аслӑ ҫулпуҫӗсем

Совет Союзӗнчи халӑхсем Октябрьти революци XXV, ҫул тултарнине фашистла оккупантсене хирӗҫ хаяр та юнлӑ вӑрҫӑ туса пынӑ вӑхӑтра паллӑ тӑваҫҫӗ. Гитлеровецсен вӑрӑ-хурахла кӗтӗвӗсем совет ҫӗршывӗн ӑшнелле кӗме урса хайсах тапаланаҫҫӗ. Тӑван ҫӗршыв умне тухса тӑнӑ хӑрушлӑх ҫивӗчленчӗ. ССР Союзӗнчи ӗҫҫыннисен вӑйӗпе 25 ҫул хушши тунӑ историллӗ аслӑ ҫӗнтерӳсем, пирӗн государствӑн, ССР Союзӗнчи мӗнпур халӑхсен, пирӗн культурӑн тата рабочисен, хресченсемпе интеллигенцин нумай ӗмӗрсем хушшинчи ӗҫӗпе тунӑ пурлӑхсем йӑлтах хӑрушлӑх умӗнче тӑраҫҫӗ.

Гитлеровецсен броньӑллӑ ҫарне хирӗҫ туса пыракан вӑрҫӑри пӗтӗм йывӑрлӑха совет халӑхӗ хӑйӗн хулпуҫҫийӗсем ҫинче тӳссе ирттерет. Эпир вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи иккӗмӗш хӗл кампанине кӗретпӗр. Ҫиҫӗм пек хӑвӑрт ҫӗнтересси ҫинчен фашистсем мухтанни илтӗнми пулчӗ. Ҫак кӗвӗсем тӑшман патӗнче тахҫанах янӑрама чарӑннӑ ӗнтӗ. Совет халӑхӗ тата Хӗрлӗ Ҫар питех те пысӑк вӑйпа хирӗҫ тӑни гитлерла вӑрӑ-хурахсен карттисене йӑлтах арпаштарса ячӗ.

Пӗтӗм Европа тӑрӑх вутпа та хӗҫпе килнӗ ҫарсене хирӗҫ тӑма пултаракан вӑйсем ӑҫтан тухаҫҫӗ-ха? Фронта нумайӑн ӑсатса тӑракан ҫар хатӗрӗсемпе боеприпассен гигантла массине мӗнле туса тӑраҫҫӗ-ха? Совет ҫыннисен фронтри тата тылри массӑллӑ геройлӑхне пуҫаракан вӑй ӑҫта-ха?

Ҫак ыйтусем ҫине памалли ответа, чи малтанах, Российӑра 25 ҫул каярах пулса иртнӗ историллӗ событисенче шырас пулать. Октябрьти революци вӑйлӑн пырса ҫапнипе кивӗ обществӑн ҫурчӗ ишӗлнӗ, Совет влаҫне туса хунӑ. Совет влаҫӗ — ӗҫҫыннисене туллирех формӑпа демократи паракан государство влаҫӗ пулчӗ. Халӑхсен тӗрми пулнӑ патша империйӗ хыҫа тӑрса юлчӗ. Тӗттӗм те чухӑн, ҫурмакрепостла Росси хыҫа тӑрса юлчӗ. Нациллӗ тата класлӑ пусмӑртан хӑтӑлнӑ ирӗклӗ пурнӑҫпа творчествӑллӑ ӗҫӗн анлӑ горизончӗсем уҫӑлчӗҫ. Рабочисемпе хресченсем малашнехи кунҫулшӑн хӑйсем хуҫа пулса тӑчӗҫ.

Ленин хӑйӗн «Грозящая катастрофа и как с ней бороться» ятлӑ кӗнекинче, октябрьти кунсем умӗн ҫырнӑскерте, ҫӗнӗ обществӑллӑ йӗрке ҫеҫ ҫӗршыва ҫывхаракан катастрофӑран ҫӑлса хӑварма пултарассине генилле курса тӑнӑ. Хальхи вӑрҫӑра экономикӑллӑ организацисем пысӑк вӑй пулса тӑраҫҫӗ, тесе ҫырнӑ Ленин. — Российӑра тырпул, ҫӗркӗмрӑкӗ, нефть, тимӗр ҫителӗклӗ. Росси хӑйӗн пӗтӗм демократизмӗпе ҫӗршыва экономикӑллӑ йӗркелӗхӗн пысӑкрах пусӑмне ҫӗкленӗ ҫӗрте усӑ курмалла. Ленин малашлӑха уҫҫӑн курса тӑнӑ. Вӑл ҫапла ҫырнӑ: «Российӑна хӑйне сыхласа хӑварма пултармалла тӑвас тесен, унта та «тӗлӗнмелле ӗҫсен» массӑллӑ геройлӑхне кӑтартмалла тӑвас тесен, киввине йӑлтах пӗр хӗрхенмесӗр шӑлса ывӑтмалла, Российӑна хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен тӗпрен ҫӗнетмелле» (XXI том, 189 стр.).

Вӑрҫӑ ҫӗршывра йывӑр кризис туса хунӑ, халӑхӑн мӗнпур материальнӑй тата моралллӗ вӑй-хӑвата хурса ӗҫлеме лекнӗ, ҫӗршывӑн, Ленин ҫырнӑ пек, «е пӗтмелле, е хӑйӗн малашнехи кунҫулне производствӑна ҫӳллӗрех пусӑма хӑвартрах куҫарма чи революциллӗ класс аллине памалла пулнӑ» (ҫав томрах, 191 стр.).

Ленин—Сталин партийӗ вара историллӗ питех те пысӑк хӑюлӑхпа ҫак задачӑна пурнӑҫа кӗртме тытӑннӑ. Большевикла парти ҫеҫ ҫакна тума хӑюлӑх ҫитернӗ. Вӑл ӑна тума хӑйӗн пӗтӗм аталанӑвӗ вӑхӑтӗнче хатӗрленсе пынӑ пулнӑ. Большевизм никӗсне хывакансем — Ленинпа Сталин самодержавин тискер террорӗ вӑхӑтӗнче вуншар ҫул хушши ҫак партин кадрӗсене туптанӑ, унӑн организациллӗ, тактикӑллӑ, программӑллӑ принципӗсене туса хатӗрленӗ. Рабочи класӑн аслӑ учителӗсем — Ленинпа Сталин, халӑх интересӗсене пӗр пӑркаланмасӑр сыхласа тӑрса, большевикла партие пӗтӗм тӗнчери историллӗ ӗҫсем валли хатӗрлесе ҫитернӗ.

1917 ҫулти событисем улшӑнса тӑнӑ вӑхӑтра большевиксем ҫине тӑрсах хӑйсен массӑллӑ-политикӑллӑ ҫарне туса хатӗрленӗ, советсенче ытларахӑш пайне йышӑнса, влаҫа алла илнӗ.

Ҫак кӗрешӳ ҫӑмӑл пулман. 1917 ҫулти июнь уйӑхӗнче Ленинӑн вӑрттӑн ӗҫлеме тытӑнма лекнӗ. Ленина тытнӑшӑн пысӑк укҫа пама пулнӑ. Керенскин шыравҫисем ӑна тем пекех шыранӑ. Парти ретне шӑвӑнса кӗнӗ сутӑнчӑксем пур майсемпе те Ленина сутма, ӑна асаплантарма тытса пама тӑрӑшнӑ. Сталин юлташ ҫине тӑнипе тата вӑл инҫетренех курса тӑнипе ҫеҫ Ленинӑн пурнӑҫӗ сыхланса юлнӑ. Ирӗксӗрех вӑрттӑн ӗҫлесе пурӑннӑ чухне те Ленин событисем мӗнле пулса иртнине тимлӗн сӑнаса тӑнӑ, парти ӗҫне ертсе пынӑ. Партин 1917 ҫулти август уйӑхӗнче пухӑннӑ VI-мӗш съезчӗ влаҫа мӗнле ҫӗнтерсе илмеллине кӑтартса панӑ. Ҫак съезд Сталин юлташ ертсе пынипе пулса иртнӗ.

Сентябрь уйӑхӗнче Ленин ВКП(б) Центральный Комитетне хӑйӗн историллӗ ҫырӑвӗсене ҫырать. Влаҫа ҫӗнтерсе илесси кун йӗркинче тӑнӑ. Октябрь уйӑхӗнче Ленин Петербурга таврӑнать. Ленинпа Сталин ывӑнма пӗлмесӗр массӑна аслӑ штурм валли хатӗрленӗ. Восстание ертсе пыракан парти центрӗн пуҫӗнче Сталин юлташ пулнӑ. Восстани пулмалли кунра «Правда» хаҫат Сталин юлташ ҫырнӑ умстатьяпа тухнӑ. Буржуаллӑ Вӑхӑтлӑх правительство хирӗҫ тӑнине часах ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, вара октябрӗн 25-мӗшӗнче (ноябрӗн 7-мӗшӗнче) Советсен II-мӗш съездӗнче власть советсен аллине куҫни ҫинчен чаплӑн пӗлтернӗ.

Ҫӗршыв нумай йывӑрлӑхсем витӗр тухнӑ. Белогвардеецсемпе интервентсене хирӗҫ пынӑ хаяр вӑрҫа тӳссе ирттерме тивнӗ. Анчах влаҫа хӑйсен аллине илнӗ ӗҫҫыннисен ирӗкне нимӗн те ҫӗнтерме пултарайман. Вӑрӑ-хурахла нимӗҫ империализмне хирӗҫ кӗрешнӗ чухне Ленинпа Сталин Хӗрлӗ Ҫара — пирӗн халӑхӑн интересӗсене паттӑррӑн хӳтӗлесе хӑварнӑ ҫара, социализмлӑ тӑван ҫӗршыва хӳтӗлекен ҫара туса хунӑ.

Ҫӗршыв ҫав хаяр кӗрешӳрен ҫӗнтерсе кенни пулса тухнӑ. Вӑрӑма тӑсӑлнӑ вӑрҫӑ хыҫҫӑн пире суранӗсене сыватма, юхӑннӑ пурнӑҫа йӗркене кӗртме, унтан вара экономикӑллӑ строительствӑн аслӑ планне пурнӑҫа кӗртессишӗн пӗтӗм фронтпа кӗрешме лекнӗ. Ленин Российӑн хуҫалӑхне ҫӗнетесси пирки калани пурнӑҫа кӗме тытӑннӑ.

Пирӗн ҫӗршыв пурнӑҫа йӗркене кӗртме тытӑннӑ вӑхӑтра Ленин вилсе выртнӑ. Вӑл хамӑр ҫӗршывӑн хуҫалӑхне ҫӗнетнӗ хыҫҫӑнхи ҫимӗҫсене кураймарӗ. Ленин тума ӗлкӗрейменнисене йӑлтах унӑн ҫывӑх тусӗ, соратникӗ Сталин юлташ пурнӑҫа кӗртрӗ.

Ленинӑн тупӑкӗ умӗнче Сталин юлташ вӑл хушса хӑварнисене тӗрӗс пурнӑҫа кӗртме пулса историллӗ аслӑ тупа тунӑ. Ҫав тупа вӑл парти хӑйӗн ҫулпуҫне, хӑйӗн учительне тупа туни пулнӑ. Ҫав тупана пурнӑҫланӑ. Ленин хушса хӑварнисене пурнӑҫа кӗртнӗ. Сталин юлташ ертсе пынипе ҫӗршыва индустриализацилес, ялхуҫалӑхне коллективизацилес аслӑ программӑна пурнӑҫа кӗртнӗ. Социализмлӑ обществӑн пысӑк ҫуртне туса лартнӑ.

Ҫӗршыва индустриализацилемелли сталинла программӑна хамӑрӑн ҫӗршыва техникӑпа экономика тӗлӗшӗнчен никама пӑхӑнса тӑмалла мар тӑвас тӗллевпе тунӑ. Халӗ ӗнтӗ эпир ҫав план питех те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине тата вӑл тӑван ҫӗршывӑн малашнехи кунҫулне сыхласа хӑварма кирлине кашни кун тӗплӗнрех ӑнланса пыратпӑр.

Ҫӗршыва хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен ҫӗнетни совет государствин класлӑ никӗсне — рабочисемпе хресченсен союзне ҫирӗплетнӗ, халӑхсен хушшинчи экономикӑллӑ танмарлӑха пӗтерсе хунӑ. ССР Союзӗнчи халӑхсен туслӑхне ҫирӗплетекен никӗс пулса тӑнӑ. Эпир пуян техникӑпа хӗҫпӑшалланнӑ тата пӗтӗм Европӑн промышленноҫне хӑйӗн аллинче тытса тӑракан вӑйлӑ тӑшмана хирӗҫ пӗтӗм вӑя хурса кӗрешетпӗр. Патша Российи хӑйӗн кая юлнӑ техникипе, хӑйӗн ҫурмаколониллӗ экономикипе ҫакнашкал йывӑр кӗрешӗве пӗр пӗччен туса пыма пултарнӑ пулӗччӗ-ши? Паллах, ҫук. Патша Российи ҫакна тума вӑй ҫитереймен пулӗччӗ.

Пирӗн ҫӗршыва хамӑр 25 ҫул каярах ҫӗнсе илнӗ политика, хамӑрӑн государство 25 ҫул хушши ҫӗнтерӳллӗн пурнӑҫа кӗртсе пынӑ политика ҫӑлса хӑварать. Тӑван ҫӗршыва эпир хамӑрӑн экономикӑллӑ организованноҫа нихҫан пулман пусӑма ҫӗклеме пултарни ҫӑлса хӑварать. Ҫӗршыва индустриализацилемелли тата ялхуҫалӑхне коллективизацилемелли сталинла политика ҫӑлса хӑварать.

25 ҫул каярах пирӗн ҫӗршыв ҫинче советсен Хӗрлӗ ялавӗ ҫӳле ҫӗкленнӗ. Халӗ ӗнтӗ ҫав ялав тӑван ҫӗршыв ҫинче мухтавлӑн ялкӑшса тӑрать, пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисен ытларахӑш пайӗ унпа савӑнса тӑрать. Совет халӑхӗсем ҫине паянхи пек ырӑ кӑмӑлпа пӑхни тӗнчере нихҫан та пулман-ха.

Пӗлтӗр, фашистсен юнлӑ аллисем Мускава тытса илме хатӗрленсе тӑнӑ вӑхӑтра, хамӑрӑн мухтавлӑ столицӑна хӑрушӑ пӗлӗтсем хупӑрласа илнӗ вӑхӑтра, Сталин юлташӑн ҫӗнтерӳ патне чӗнекен сӑмахӗ пӗтӗм тӗнчене шанчӑклӑн илтӗнсе кайрӗ. Калинин юлташ калашле, Сталин юлташӑн ҫав историллӗ сӑмахӗсем хыҫҫӑн пирӗн вӑйсем икӗ хут ӳсрӗҫ.

Совет халӑхӗн аслӑ ҫулпуҫӗ Сталин юлташ ун чухне гитлеровецсене пурпӗрех пӗтерессине ҫинчен ҫирӗппӗн шантарса каларӗ. Иртнӗ ҫулталӑкра пысӑк ҫухатусем турӑмӑр пулин те, тӑшман Совет ҫӗрне чылай тытса илме пултарчӗ пулин те, фашистсене пурпӗрех пӗтерсе тӑкас тата хамӑр ҫӗнтерӳ тӑвас шанчӑк халӗ татах та ӳсрӗ. Ҫӗнтерӳ тума пирӗн пур майсем те пур. Пирӗн задача — ҫав майсемпе туллинрех усӑ курасси.

Эпир, Октябрьти революци 25 ҫул тултарнине паллӑ туса, кӗрешӗве хамӑр вӑй-хӑвата тата та ытларах хуратпӑр, йӑвашчунлӑхпа тимсӗрлӗхе пӗтерсе пыратпӑр, хамӑрӑн сисӗмлӗхе, организованноҫа, дисциплинӑна тата вӑрҫӑ ӗҫӗнчи пултарулӑха ӳстеретпӗр. Эпир ҫӗнтеретпӗрех. Ҫакна пирӗн парти, хамӑрӑн ҫулпуҫ тата полководец Сталин юлташ тӗрӗс ҫулпа ертсе пыни уҫҫӑн кӑтартса парать. Фашистла мерзавецсем 25 ҫул каярах ҫуралнӑ ҫӗршыва, унта 25 ҫул хушшинче тунӑ ҫитӗнӳсене пӗтерсе тӑкаймӗҫ! Гитлеризм пӗтет! Пирӗн тӗрӗс ӗҫ ҫӗнтерет!

А. АЗИЗЯН.

Белорусс хӗрӗсем Кельнран янӑ ҫырусем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС спецкорӗ). Ҫак кунсенче Борисов хулине тӗрлӗ майсемпе Кельнран икӗ ҫыру илсе ҫитернӗ. Вӗсене белорусс хӗрӗсем Лиза Буракпа Алеся Сакович, Германие ирӗксӗр илсе кайнӑскерсем, ҫырнӑ.

Акӑ мӗн ҫырать Лиза Бурак: «Хаклӑ атте-анне, йӑмӑксем! Ҫак ҫырӑва сире инҫетри Германирен ҫыратӑп. Сирӗнпе калаҫмалли ҫакӑ вӑл манӑн пурнӑҫра, тен, юлашки май пулчӗ пулӗ, ҫавӑнпа усӑ курса эпӗ сире пурне те йӗркерен каласа паратӑп. Кам пӗлет, тен, ку вӑл юлашки ҫыру пулӗ, эпир нихҫан та пӗрне-пӗри кураймӑпӑр. Манӑн хурлӑхлӑ пурнӑҫ ҫинчен тӗрӗссине пӗлӗр эппин. Кунта пурӑнма мӗнтери йывӑррипе хӑрушшине эсир чухласа илме те пултараймастӑр. Ҫырӑва та ирӗккӗн ларса ҫырма ҫук. Российӑна каякан кашни хут татӑкне нимӗҫсем хытӑ тӗрӗслеҫҫӗ. Минск облаҫӗнчен илсе килнӗ пӗр хӗрача хӑй кунта пӗр уйӑх ытла ӗнтӗ пӗр ҫӑкӑр тӗпренчӗкӗ те курманни ҫинчен тата апат тӑккаланчӑкӗсемпе кӑна тӑранса пурӑнни ҫинчен тӑван ҫӗршыва ҫырса янӑ пулнӑ. Ҫакӑ вара «пирӗн хуҫана» питех те килӗшмен, вӑл хӗрачана «ӑс пама» хушнӑ. Палачсем ӑна питӗ хытӑ хӗнесе пӗтернӗ, вӑл аран чӗрӗ тӑрса юлчӗ. Мӗн кӗтмелле-ха ӗнтӗ манӑн кунта? Нимӗҫ чури пуласшӑн ҫуралса ӳснӗ-ши эпӗ? Ҫакна тӳссе ирттеричччен вилни ҫӑмӑлрах.

Эсир пӗлетӗр, мана повестка пачӗҫ те эпӗ ҫар комендатурине перерегистрацине кайрӑм. Анчах та мана улталарӗҫ. Унта нимӗнле перерегистраци те пулмарӗ. Ҫакна ӑна ухмах ҫынсемшӗн, вӗсене нимӗҫсен танатине ҫаклатса, унтан хӑйсен империне чуралӑха илсе каяс шутпа тунӑ. Эпӗ ҫири кӗпепе анчахчӗ, тумтирсем илме мана киле яма ыйтрӑм. Нимӗҫ офицерӗ мана тепӗр кунне киле яма пулчӗ, эпӗ айванскер ҫакӑнпа лӑпланса лартӑм.

Темӗнле кивӗ мунчара ҫывӑрса ҫӗр каҫрӑмӑр. Ҫӗрле пире вӑратрӗҫ те тухма хушрӗҫ. Эпӗ умра хӗҫпӑшаллӑ ҫынсем нумай тӑнине куртӑм, пире мӗн тӑвассине эпӗ чухламан та. Пире вагонсем ҫине лартрӗҫ те турттарса кайрӗҫ. Мӗн чухлӗ кӑшкӑрашу, мӗн чухлӗ куҫҫулӗ пулчӗ кунта! Пире ирпе каҫ вӗрипыв паратчӗҫ, кӑнтӑрла мӑшкӑлтӑк шывӗ пек яшка. Эпир хамӑр колхозра ӗлӗк сыснасене те кун пек тӑрантарман.

Нимӗҫ хулине пырса ҫитсен, пире темӗнле площадка ҫине илсе тухрӗҫ те ҫынсене кӑтартма йӗркерен тӑратрӗҫ. Нимӗҫсем кашни хӗрача патне пырса, ӑна ура тупанӗнчен пуҫласа пуҫ тӳпине ҫитиччен пӑхса тухаҫҫӗ. Ҫирӗп те ҫӳллӗ ӳт-пӳллӗ хӗрачасене нимӗҫсем пӗр-пӗринпе харкашсах турта-турта илеҫҫӗ, ҫул ҫинче выҫӑпа начарланса сарӑхса кайнисем ҫине сураҫҫӗ кӑна. Эпӗ темӗнле пуян нимӗҫ патне лекрӗм. Мӗн хушнине пурне те тума лекет. Каласси ҫинчен шухӑшламалли те ҫук. Пӗр сӑмахпа каласан, эпӗ пӗтнӗ ҫын. Манпшӑн ӗнтӗ ан та тӑрӑшӑр, мӗншӗн тесен тӑрӑшни ахалех пулӗ. Унта хӑвӑра-хӑвӑр лайӑхрах сыхланӑр. Анне, йӑмӑксене ниҫта та ан яр. Нимӗҫсенчен тарччӑр, ахалӗн вӗсене ман пекех йывӑр килсе тухать».

Алеся хӑйӗн ҫырӑвӗнче ҫапла ҫырать: «Ырӑ кун сире, тӑвансемпе пӗлӗшсем! Хамӑн ҫырӑвӑн малтанхи йӗркисенче эпӗ сирӗн хушӑра чи телейсӗрри ҫинчен ҫырса пӗлтересшӗн. Нимӗҫсем мана ютҫӗршыва, инҫете хӑваласа килчӗҫ. Кунта тӗрмеринчен те йывӑртарах. Пире начар ҫитереҫҫӗ: кунне пӗрер котелок вӗретмен шӳрпе параҫҫӗ. Эпӗ малтанах ҫиейместӗмччӗ, лӗклентернипе хӑсаттӑмччӗ.

Анне! Эпӗ начарланса ҫитрӗм, часчасах чирлекен пултӑм. Вар-хырӑм таптӑхӑр-тапхӑр хӑрушла ыратать. Нимӗҫрен тухтӑр патне яма ыйтрӑм, анчах вӑл мана ҫапла ответлерӗ:

— Выльӑх, кам саншӑн ӗҫлет? Эпӗ сана илемлӗ сӑн-питшӗн сутӑн илнӗ-и вара? — терӗ.

Ҫапла, кунта хӑрушла ҫынсем. Татти-сыпписӗр ӗҫлеме лекет, тӗттӗмле пуҫласа тӗттӗмччен. Кӳлсе янӑ выльӑх пек, пӗр ураран ӳкиччен сӗтӗрӗнес пулать. Ҫывӑрасса шӑтӑк-ҫурӑк сивӗ витере ҫывӑрма лекет, кун пек ҫӗрте этем мар, йытӑ та пурӑнайрас ҫук.

Сывӑ пулӑр, тӑван атте-анне, хӑвӑрӑн тӑван хӗрне усалпа ан асӑнӑр. Ҫакӑн пек чуралӑха вӑл хӑйӗн ирӗкӗпе мар кайрӗ, унӑн пурнӑҫне фашистла ирсӗрсем пӗтерчӗҫ, ҫакӑншӑн вӗсене манӑн пиччесем хаярррӑн тавӑрӗҫ. **Алеся».**

Партие илес ӗҫе лайӑхлатмалла

Ҫӗмӗрле комбинатӗнчи малта пыракан рабочисем, инженерно-технически работниксем тата служащисем ҫӗршывшӑн ҫак питех те йывӑр кунсенче хӑйсен малашнехи кунҫулне Ленин—Сталин аслӑ партийӗпе ҫыхӑнтараҫҫӗ. Юлашки вӑхӑтра кӑна эпир темиҫе ҫынна ВКП(б) ретне илтӗмӗр. Вӗсен шутӗнче Г. Поваренных, П. Никитин, Скворцов, Исаев юлташсем пур. Вӗсем, хӑйсен вырӑнӗсенче тӳррӗн, пример кӑтартса ӗҫленисӗр пуҫне, обществӑллӑ ӗҫе активлӑн хутшӑнаҫҫӗ, кулленех рабочисем хушшинче калаҫусем туса ирттереҫҫӗ, хаҫатсем вуласа параҫҫӗ.

Юлашки вӑхӑтра партиллӗ-массӑллӑ ӗҫе чылай вӑйлатрӑмӑр. Партбюро нумай пулмасть цехсенчи парторгсемпе 2 хутчен канашлу ирттерчӗ. Унта парти ретне ӳстерес тӗлӗшпе тумалли ӗҫсем ҫинчен сӳтсе явнӑ. Кунсӑр пуҫне тата ҫак ыйтупах коммунист Малышев юлташ парти активӗпе, агитколлектив руководителӗ Лобанский юлташ цехсемпе отделсенче калаҫусем ирттерчӗҫ.

Производствӑра малта пыракан рабочисене ВКП(б) ретне явӑҫтарас тӗлӗшпе парторгсенчен уйрӑмах Гусев, Илларионов, Иванов юлташсем тата партбюро членӗ Егоров юлташ лайӑх ӗҫлеҫҫӗ.

Малта пыракан ҫамрӑксене парти ретне илесси те ҫак уйӑхсенче лайӑхланни сисӗнет. Комбинатри ВЛКСМ комитечӗ ку ыйтупа уйрӑм комсомолецсемпе тата союзра тӑман ҫамрӑксемпе калаҫусем ирттерчӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн комсомолецсенчен Горяев, Медведева, Хорычева, Куленко, Канавичев тата ытти хӑшпӗр юлташсем парти ретне кӗме хатӗрленме тытӑнчӗҫ.

Анчах эпир парти ретне илес тӗлӗшпе ку таринччен тунӑ ӗҫсене ниепле те ҫителӗклӗ теме ҫук-ха. Парти ретне илме тивӗҫлӗ ҫынсем комбинатра сахал мар, вӗсем хушшинче пирӗн тата ытларах ӗҫлемелле. Парторганизацин малашне цехсенче, отделсенче партиллӗ-политикӑллӑ ӗҫе тата витӗмлӗнрех туса пымалла, малта пыракансемпе уйрӑмӑн ӗҫлессине вӑйлатмалла.

Пирӗн задача — ВКП(б) ретне ҫӗнӗ юлташсене явӑҫтарса тӑрасси. Ку ӗҫе вӑхӑтран вӑхӑта ҫеҫ мар, куллен туса пымалла.

А. МАЗУРЕНКО,
ВКП(б) Центральный Комитечӗн Ҫӗмӗрле комбинатӗнчи парторгӗ.

Ют ҫӗршывсенче

ГЕРМАНИ САМОЛЕЧӖ ШВЕЦИ ТЕРРИТОРИ ТӖЛӖНЧЕ ЧАРУСӐР ВӖҪСЕ ҪӲРЕНӖ ПИРКИ ШВЕЦИ ХАҪАЧӖ МӖН ҪЫРАТЬ

СТОКГОЛЬМ, октябрӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Швецин «Нюа даглитт алеханда» хаҫачӗ, Германи самолечӗ октябрӗн 25-мӗшӗнче Гельсингборг районӗ тӗлӗнче вӗҫсе ҫӳренӗ пирки чарӑнса тӑрса, ҫапла ҫырать: «Нумаях пулмасть оборона ҫав самолет, ун ҫине асӑрхаттармалла пенӗ хыҫҫӑн, хӗвеланӑҫ еннелле пӑрӑнса кайни ҫинчен пӗлтерчӗ». Тӗрӗссипе, вырӑнти пичет пӗлтернӗ тӑрӑх пӑхсан, ӗҫ пачах урӑхла пулнӑ, тесе кӑтартса парать хаҫат. Чӑннипе, ҫав самолет ирхине нефть порчӗ тӗлӗнче курӑннӑ хыҫҫӑн аяккалла вӗҫсе кайнӑ. Тепӗр 20 минутӑран вӑл хуларан ҫурҫӗр еннерехре татах та тепӗр хут вӗҫсе иртнӗ. Ун ҫине пенӗ пирки, вӑл хӑйӗн ҫулӗнчен пӑрӑннӑ та Гельсингборгӑн хӗвелтухӑҫ пайӗ урлӑ вӗҫсе иртнӗ. Унта ун ҫине татах пенӗ, вара юлашкинчен самолет куҫран ҫухалнӑ. Хӗвеллӗ уяр кун пулнӑ пирки самолета паллаласа илес тӗлӗшпе нимӗнле йӑнӑш та пулма пултарайман. Самолет разведка тӑвас шухӑшпа вӗҫсе ҫӳренӗ пулӗ тесе каласа, хаҫат ҫапла ҫырать: «ӗҫ апла пулсан, унӑн результачӗсем ӑнӑҫлӑ вара, мӗншӗн тесен ӑна нимӗнле сиен те кӳмен. Пуриншӗн те паллӑ, хальхи правилӑсем тӑрӑх, асӑрхаттарса пени пулӑшмасан, ют самолет ҫине чӑнласах пеме юрать». «Апла вара нейтралитета Гельсингборгри пек уҫҫӑнах пӑснине курса тӑрсах мӗншӗн-ха ҫав правилӑпа усӑ курман?»—тесе ыйтать хаҫат.

ЧЕХ ҪАМРӐКӖСЕМ ОККУПАНТСЕНЕ ПАРӐНМАН

СТАМБУЛ, октябрӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). Прагӑран илнӗ хыпарсем тӑрӑх, чех ҫамрӑкӗсем хушшинче Германие хирӗҫле шухӑш-кӑмӑлсем ӳссе пынӑ пирки гитлеровецсем питех те шикленсе ӳкнӗ. Нимӗҫсен влаҫӗсем чех ҫамрӑкӗсене уйрӑмах хаяррӑн тыткалаҫҫӗ. Венгрин «Пестер ллойд» хаҫачӗ ҫапла пӗлтерет: салатса янӑ «Орел» ятлӑ спорт обществин членӗсем пулнӑ ҫамрӑксене массӑллӑн арестлеҫҫӗ, мӗншӗн тесен, оккупациллӗ влаҫсем пӗлтернӗ тӑрӑх, «Гейдрих ҫине тапӑннине тӗпченӗ чухне ҫав организацин анлӑ ушкӑнӗсем Германие хирӗҫле ӗҫсем туса пынӑ». Ютҫӗршыв ҫыннисен вырӑнти ушкӑнӗсем панӑ хыпарсем тӑрӑх, Прагӑпа Брно хулисенчи тӗрмесенче ҫамрӑк чехсем темиҫе ҫӗршер ҫын асапланаҫҫӗ. Вӗсене «Гейдриха тапӑннӑ ҫӗре хутшӑннӑ пулӗ» тесе айӑплаҫҫӗ.

Нумай мар вӑхӑт каярах гитлеровецсем Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтне яма «доброволецсем» пухма хӑтланнӑ. Гитлеровецсен ҫав мероприятине хирӗҫ чех халӑхӗн ҫамрӑк патриочӗсем вӑрттӑн анлӑ кампани пуҫласа янӑ. Нумай хуласенче «чех халӑхӗн ятне вараламалла мар» тесе чӗнекен листовкӑсем салатнӑ. Гитлеровецсем «доброволецсем» пухма хӑтланни намӑсла путланса ларнӑ. Икӗ эрне хушшинче оккупациллӗ влаҫсем чи ирсӗр уголовниксем хушшинче пӗтӗмпе те пӗр 20 «доброволеца» яхӑн кӑна тупнӑ.

ВАРШАВӐРА НИМӖҪ ОККУПАНЧӖСЕНЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, октябрӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Варшавӑран илнӗ хыпарсем тӑрӑх, унта Польша патриочӗсем нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене тата чиновникӗсене тапӑнасси час-часах пула пуҫланӑ. Октябрӗн 24-мӗшӗнче нимӗҫ офицерӗсем валли ӗҫлекен кафене бомба пӑрахнӑ. Ҫав кунах оккупантсемшӗн ӗҫлекен тепӗр кафене тӗппипех сирпӗнтерсе ишӗлтернӗ, унта нимӗҫсен темиҫе офицерӗ вилнӗ, нумайӗшӗсем аманнӑ. Гестапо отрячӗ заложниксем вырӑнне 50 поляка тытса хупнӑ. Германин Варшавӑри губернаторӗ взрывсем пулнишӗн айӑплисене тупса памасан, арестленисене асаплантарса вӗлересси ҫинчен приказ кӑларнӑ. Приказра поляксене каҫхине 7 сехет иртсен урама тухма чарасси ҫинчен кӑтартса панӑ.

Тӗнчери ӗҫсене пӑхса тухни

Пӗтӗм тӗнче Сталинградшӑн пыракан ҫапӑҫӑва сӑнаса тӑрать. Пӗр ӳстермесӗрех ҫакна калама пулать: иртнӗ хӗлле нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене Мускав патӗнче ҫапса аркатнӑранпа, Атӑл ҫинчи легендӑллӑ хулана хӳтӗлени чухлӗ вӑрҫӑри пӗр событи те интереслентермен.

Ҫак кунсенче Сталинград ҫинчен пурте калаҫаҫҫӗ. Унӑн геройлӑхӗн тӗслӗхӗ чуралӑха кӗрсе ӳкнӗ ҫӗршывсен патриочӗсене, ирӗклӗхе юратакан мӗнпур халӑхсене Гитлерӑн ирсӗр те юнлӑ режимне хирӗҫ, фашистла «ҫӗнӗ йӗркене» хирӗҫ хаяррӑн кӗрешме хавхалантарать. Нейтральнӑй ҫӗршывсенче те, уйрӑмах нимӗҫсен фашистла бандисем тӑтӑшах терроласа хӑратса пурӑнакан пысӑк мар ҫӗршывсенче, хавхалану ӳсрӗ тата гитлерла Германие пурӗ-пӗрех ҫапса аркатассине ӗненес шухӑш-кӑмӑл вӑйланчӗ.

Ҫакна ӑна Сталинград ҫапла туса хучӗ.

Швеци «Карлстадс тиднинген» хаҫачӗ, Сталинграда хӳтӗлекенсене тивӗҫлипе чыса хурса, шведсен шухӑш-кӑмӑлӗсене кӑна мар каласа парса, ҫапла ҫырнӑ: «Юлашки эрнесенче пулса иртнӗ гигантла ҫапӑҫусем хыҫҫӑн, Сталинград пӗр шухӑш-кӑмӑлпа таччӑн пӗтӗҫнӗ халӑх хӑйӗн ҫӗрне хӳтӗлес тӗлӗшпе мӗн тума пултарнине кӑтартакан ҫавтери чаплӑ символ пулса тӑрать», тенӗ. Ҫапла, Сталинград вӑл Мускав, Ленинград, Севастополь хулисем пекех, ҫуталса тӑракан символ, Совет Союзӗнчи халӑхсен иксӗлми ҫирӗплӗхне, пирӗн ҫӗршывӑн аслӑ хӑватне кӑтартса паракан символ пулса тӑрать.

Сталинградӑн геройлӑхӗ ҫинчен тӗнчен чи аякри ҫӗршывӗсенче пӗлеҫҫӗ, ӑна хӳтӗлекенсен хӑватне пур ҫӗрте те туйса тӑраҫҫӗ. Балтиморта (США) геройхулана хӳтӗлекенсен ячӗпе «Сталинград эрни» организациленӗ; Иоганнесбургра (Кӑнтӑрти Африка) Сталинграда упӑшкисемпе, тӑванӗсемпе пӗр танах тӑрса хӳтӗлекен хӗрарӑмсен геройлӑхӗпе тӗлӗнсе савӑннине палӑртас шутпа хулари ратушӑн залӗнче хӗрарӑмсен ҫавтери пысӑк митингӗ пухӑннӑ; Монтевидеора (Уругвай) Атӑл ҫинчи крепоҫа гитлерла йыткӗтӗвӗсем хӗссе пынине сирсе тӑракан Хӗрлӗ Ҫарӑн боецӗсемпе пӗр шухӑш-кӑмӑллӑ пулнине палӑртма 10 пин ҫын демонстраци туса ирттернӗ; Такома хулинчи (США) сутуилӳ палати Совет Союзне официальнӑй послани янӑ, унта «Сталинграда геройла хӳтӗлени ирӗклӗ халӑхсене ҫӗр ҫуллӑха хавхалантарать» тесе каланӑ. Ҫакӑн пек фактсем вӗсем татах та нумай. Вӗсенче тӗнчери халӑхсем Совет Союзне татах та ытларах юратма пуҫлани, пирӗн тӑван ҫӗршывӑн авторитечӗпе чапӗ совет чиккисен лешьенне тухса нумай аякка сарӑлни палӑрса тӑрать.

Египет публицисчӗ «Египетри обозренире» ҫапла ҫырать: «Этемлӗх хӑй аталанӑвӗн ҫулӗ ҫинче паттӑрлӑхпа, нимӗнрен хӑраманнипе, аслӑ вӑй-хӑватпа чапа тухнӑ чылай геройсем ҫитӗнтернӗ, вӗсен хушшинче: Ганнибал, Александр Великий, Самсон, Геркулес, Саломея. Ҫав геройсен чапӗ пиншар ҫул ытла пурӑнать. Вырӑс ҫыннисем вӗсен паттӑрлӑхӗпе геройлӑхӗнчен те иртсе каяҫҫӗ. Вырӑссем хӑйсем пӗтӗм этемлӗхрен нумай ҫул малалла кайнине кӑтартса пачӗҫ». Ҫав сӑмахсенче Совет Союзне хисеплени тата юратни палӑрса тӑрать.

Тӗнчери обществӑллӑ шухӑш Сталинграда хӳтӗлекенсен геройлӑхне йышӑннипе кӑна чарӑнса тӑмасть. Вӗсем ҫакӑнпа пӗрлех Сталинградшӑн пыракан ҫапӑҫусен тепӗр енӗ ҫине те—нимӗҫ захватчикӗсен пулас кунҫулӗ ҫине те ҫавӑрӑнса пӑхаҫҫӗ.

Пуриншӗн те паллӑ, гитлерла ушкӑн Сталинграда пырса ҫапассине хӑйӗн кӑҫалхи тӗп ӗмӗчӗсемпе, чи пысӑк шанчӑкӗсемпе ҫыхӑнтарнӑ. Анчах та нимӗҫсен фашистла захватчикӗсем Сталинграда пӗрре пырса тапӑннипех тытса илме пултараймарӗҫ. Кӗрешӳ вӑраха кайрӗ. Гитлерла ушкӑншӑн ҫӗнӗ лару-тӑру тухса тӑчӗ, ҫӗнӗ, татах та йывӑртарах, чи пысӑк хӑрушлӑх кӳрекен лару-тӑру тухса тӑчӗ.

Англири вӑрҫӑ ӗҫӗсене пӑхса тӑракан паллӑ обозреватель майор Гастингс: Сталинграда ҫирӗппӗн хӳтӗленине пысӑк пӗлтерӗшӗпе асӑрхамасӑр никам та иртсе кайма пултараймасть, тесе, ҫырать. «Хӗрлӗ Ҫар хирӗҫ тӑни,—кӑтартса парать Гастингс, — Германин чи лайӑх дивизийӗсене нумайӗшӗсене питех те пысӑк сиен кӳрет кӑна мар, ҫакӑнпа пӗрлех вӑл Германи командованийӗн 1942 ҫулти стратегиллӗ планне тӗппипех аркатса ярать. Ҫакна ӑна совет ҫарӗ тӑшмана хирӗҫ пӗччен тӑрса кӗрешсе турӗ».

Чикӗ лешьенчи пичетре юлашки вӑхӑтра Гитлерӑн планӗ ӑнӑҫсӑр пулнӑ пирки Германи генералитетӗнче ҫӗнӗ «татасату» пуҫланни ҫинчен ҫине тӑрсах пӗлтере пуҫларӗҫ. Ҫакӑ вӑл ҫавнашкал пулма та пултарать. Анчах нимӗн иккеленмелли те ҫук, нимӗҫ салтакӗсен шухӑш-кӑмӑлӗ, ҫавӑн пекех тата мӗнпур нимӗҫсен шухӑш-кӑмӑлӗсем те начарланнӑ.

Нимӗҫсен бронетанковӑй войскисем валли кӑларакан «Панцерфауст» хаҫат юлашки вӑхӑтра салтаксем хушшинче сиенлӗ лозунгсем анлӑн сарӑлни пирки ӳпкелешет. Ҫав лозунгсенче ҫакӑн пек шухӑш-кӑмӑлсене палӑртаҫҫӗ: «Пӗрремӗшӗнчен, вӑрҫӑ хӑйӗн татса паракан чи ҫӳллӗ пункчӗ патне ҫывхарса пырать, эпир тӑван ҫӗршывран татӑлса кайса йывӑр испытанисем тӳссе ирттеретпӗр; ҫакӑ паллӑ, ҫавӑн пек вӑраха пыракан йывӑр испытани пӗр-пӗр кун катастрофӑпа вӗҫленет. Апла пулсан ӗнтӗ, пирӗн ӗҫ те пӗр-пӗр кун катастрофа патне ҫитсе перӗнет», теҫҫӗ. Иккӗмӗшӗнчен, салтаксем хӑйсем хушшинче—«вӑрҫӑшӑн фашистсем кӑна тӑраҫҫӗ, ҫавӑнпа та ӗнтӗ пирӗн татах та ытларах юн тӑкма лекет», теҫҫӗ.

Паллах, фашистла листок ҫавнашкал лозунгсене хирӗҫ питех те хытӑ тарӑхса вӑрҫать. Ҫав лозунгсем вӗсем фронта ҫырусем урлӑ тылран сӑрхӑнса пыраҫҫӗ, тесе йышӑнать хаҫат.

Ҫакна уйрӑмӑнах палӑртмалла: вӑрҫӑ малалла тӑсӑлса пынӑ пирки никам та мар, рядовой нимӗҫсем катастрофа пуласси ҫинчен ҫӗнӗрен калаҫма тытӑнчӗҫ.

* * *

Фашистла ушкӑнсем Итали ҫӗршывне Германи фашисчӗсен аллине панӑ. Гитлерпа союзлӑ пулса Италия намӑспа телейсӗрлӗх мӗн иккенне чухласа илчӗ. Итали империализмӗ халиччен ҫаратса тултарнисене — Африкӑри колонисене Муссолини вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа пӗтӗмпех ҫухатса пӗтерме ӗлкӗрчӗ. Германи империализмӗн интересӗсемшӗн пыракан ҫак вӑрҫӑра Италия ҫавтери пысӑк ҫухатусем тӳсрӗ, ҫавӑнпа нимӗн те тӗлӗнмелли ҫук, Итали халӑхӗ вӑрҫӑн хӑрушла йывӑрлӑхӗсене малалла тӳссе пыма кӑмӑлламасть.

Италире фашистла режим туса хуни 20 ҫул тултаричччен темиҫе кун маларах кӑна Муссолинин тӗп органӗ «Пополо д'Италиа» хаҫат ҫӗршывра пораженецсем нумайҫҫине тата вӗсем нимӗнрен те хӑраманнине йышӑннӑ. Кунтан та ытларах, ҫав пораженецсем вӑрҫӑ мӗнле те пулин хӑвӑртрах пӗтме тивӗҫлӗ тесе шутлаҫҫӗ. Фашистсен «Реджиме фашиста» хаҫачӗ ҫакӑнтан сахал мар интереслентерекен йышӑну тунӑ, вӑл—«Италири граждӑнла халӑх хушшинче шанманлӑх пуҫ пулса тӑрать», тесе йышӑнать.

Муссолини Италин премьер-министрӗ тата унӑн иккекӗ пулса тӑнине уявлас кун ҫитнӗ чухне Италири фашистла пичетӗн ирӗксӗрех салхуллӑ шухӑшсене парӑнма лекнӗ. Вӗсем пурте тавӑру инҫе мар юлнине туйса тӑраҫҫӗ.

И. ЕРМАШОВ.

ПОЛГАРИ ХАҪАЧӖ ЭРНЕРЕ ҪӐКӐРСӐР ЛАРМАЛЛИ ИКӖ КУН ТУМА СӖНЕТ

СОФИЯ, октябрӗн 29-мӗшӗ. (ТАСС). «Дневник» хаҫат Болгарире тырпул акмалли план вӑрлӑхпа ӗҫ вӑйӗ ҫителӗксӗр пулнӑ пирки пурнӑҫа кӗреймест пулӗ, тесе ҫырать. Ҫав ҫитменлӗх питех те ҫивӗч пулнӑ пирки, хаҫат «эрнере ҫӑкӑрсӑр лармалли икӗ кун» тума сӗнет. «Ҫапла майпа вара темиҫе миллион килограмм тӗштырӑ перекетлесе хӑварса, унпала тырӑ акнӑ ҫӗрте усӑ курма май пулать», тесе ҫырать хаҫат.

Ответлӑ редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Наркомторгу Чувашской АССР
ТРЕБУЮТСЯ
старший контролер, два экономиста и секретарь-машинистка.
Обращаться: гор. Чебоксары, ул. Кадыкова, 7, отдел кадров.

Срочно требуется секретарь-машинистка, знакомая со стенографией.
Обращаться: ул. 15 лет Комсомола, д. 2, политотдел.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОН СЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн — 4—26, пропагандӑпа парти пурнӑҫ пайӗн — 3—99, ялхуҫалӑх пайӗн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11573 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.